ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2012

# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

сайт адресĕ: www.put-pobedy.cap.ru

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

ВĂРНАР РАЙОН ХАÇАЧĔ • 2012 çул • авăн/сентябрь/ уйăхĕн 1-мĕшĕ • шăмат кун • 104–105 /10574/ № • Хакĕ ирĕклĕ

## Паян – Пĕлӳ кунĕ

УВАЖАЕМЫЕ УЧИТЕЛЯ И УЧЕНИКИ, ПРЕПОДАВАТЕЛИ И СТУДЕНТЫ, ВОСПИТАТЕЛИ И РОДИТЕЛИ, ВЕТЕРАНЫ ПЕДАГОГИЧЕСКОГО ТРУДА!

В этом году в Вурнарском районе 1 сентября школьный звонок прозвенит для 3968 учеников, из них 348 первоклассников и 294 будущих выпускника 11-х классов.

1 сентября – это праздник новых знаний и открытий, которого ждут все: учащиеся, педагоги, родители, и с особым нетерпением – первоклассники и первокурсники. В условиях быстро меняющегося мира востребован всесторонне грамотный человек. Поэтому полученное Вами образование – залог успешного и благополучного будущего. Именно на Вас -- молодых, талантливых, энергичных, сегодня возлагаются большие надежды.

Желаю всем школьникам покорения новых вершин, вдохновения и успехов в достижении поставленных целей, уважения и благодарности к своим учителям. Родителям – благополучия и уверенности в счастливом будущем детей, радости от достижений и школьных побед, а педагогам – успехов в их нелегком, но благородном труде, терпения, чуткости и любви к детям.

В добрый путь, дорогие друзья! С началом нового учебного года! Поздравляю Вас с праздником – Днем знаний!

**Глава администрации Вурнарского района Л.НИКОЛАЕВ.**

УВАЖАЕМЫЕ ПЕДАГОГИ И ВЕТЕРАНЫ ПЕДАГОГИЧЕСКОГО ТРУДА! ДОРОГИЕ УЧАЩИЕСЯ, РОДИТЕЛИ!

Поздравляю вас с замечательным праздником – Днем знаний и началом нового учебного года!

В этот праздничный день снова распахнутся двери школ. В огромную и прекрасную страну знаний отправятся 3968 детей школ района, в том числе 348 первоклассников.

Этот учебный год примечателен тем, что он вселяет новые надежды и ставит задачи по модернизации Российского образования.

Наступательное создание современной инфраструктуры, внедрение эффективных экономических механизмов, повышение статуса педагогических работников – все эти процессы направлены на воспитание высокообразованного, конкурентоспособного, культурного человека.

И отрадно, что вы, педагоги, осваивая новые программы обучения, современные образовательные технологии, продолжаете и приумножаете лучшие традиции отечественной школы.

Пусть каждый день приносит вашим учащимся счастье поиска и познания нового. Искренне желаю всем педагогам, учащимся осуществления замыслов, творческих успехов, интересных уроков и духовно богатой жизни.

**Начальник отдела образования и молодежной политики администрации Вурнарского района Н.ИВАНОВ.**

# Кашни ачан вĕренӳ туртăмĕ пултăр



**Çĕрпелти вăтам шкулта паян йĕс шăнкăрав вун тăватă ачашăн пĕрремĕш хут янăрать. Хăйсен пĕрремĕш учителĕпе паллашма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ вĕсем, каникул вăхăтĕнче уяв линейки валли сăвăсем вĕренме çӳренĕ.**

**Людмила Никитична Иванован умра тата яваплăрах тапхăр – пĕчĕкскерсене вулама-çырма хăнăхтарасси çеç мар, вĕсенче вĕренӳ туртăмне вăратма пулăшасси те. Ку енĕпе унăн опыт пысăк. Пуçламăш пĕлӳ никĕсне вăл ачасенче 20 çул ытла хывать ĕнтĕ.**

Шкул çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче пĕтĕмпе 202 ачана йышăнĕ. Вĕсен хушшинче вĕренӳ отличникĕсем 31-ĕн. Пĕлтĕр 18 ача районти предмет олимпиадисен çĕнтерӳçи пулса тăнă. 10-мĕш класри Андрей Николаев вара (ертӳçи Евгений Георгиевич Захаров) историпе республикăра та палăрнă.

Çитĕнекен ăрăвăн ăсхакăлне пуянлатассишĕн, тавракурăмне ӳстерессишĕн 25 вĕрентекен тăрăшать. Вĕсем те – пурнăç хастарĕсем: професси конкурсĕсене çулсеренех хутшăнаççĕ, малти вырăнсене тухаççĕ.

Ачасене йышăнма шкулта çуллахи вăхăтра чылай ĕç пурнăçланă: чӳрече блокĕсене улăштарнă, спортзалта, информатика тата директор кабинечĕсенче пластик кантăксем лартнă, шалта туалетсем тунă, фойери алăка çĕнетнĕ тата ытти те. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне шкул библиотеки те литературăпа пуянланнă – вĕренӳ пособийĕсемпе, учебниксемпе педколлектив тимлесех паллашать.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче ачасене вĕри апат çитерессипе те ыйтусем пулмĕç – шкул участокĕнче кăçал пахча çимĕç тулăх çитĕннĕ.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

Сăн ӳкерчĕкĕ –авторăн.

# Çурт-йĕр строительствине аталантарма – 69,74 млн тенкĕ

**Федерацин «Пурăнмалли çурт-йĕр» тĕллевлĕ программин «Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантармалли программисене çул парасси» çум программипе килĕшӳллĕн регионсенчи пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантармалли тĕллевлĕ программăсен мероприятийĕсене пурнăçлама Раççей Правительствин Председателĕ 2012 çулхи çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче алă пусса çирĕплетнĕ хушупа килĕшӳллĕн 2011–2015 çулсенче 2 409 540 000 тенкĕ уйăраççĕ.**

### РЕСПУБЛИКĂРА

Çак укçа-тенке Раççейри 26 региона, çав шутра Чăваш ене те, пайлаççĕ. Пирĕн республикăна 69 744 430 тенкĕ уйăрса панă. Ку – федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен хушшинче калăпăшĕпе иккĕмĕш сумма.

Федераци бюджечĕн укçи-тенкине çак объектсене яраççĕ:

1. «Хĕвел тухăç» ГИБДД посчĕ çывăхĕнче «Шупашкар – Çĕнĕ Шупашкар» автоçул çине тухма Шупашкар хулин «Çĕнĕ хула» пурăнмалли районĕн строительствин 1-мĕш черечĕн хута ямалли 1-мĕш комплексĕн автомобиль çулне» тума – 41 102,59 пин тенкĕ.

2. «Çĕнĕ Шупашкар хулин Хĕвел анăç районĕн III-А микрорайонĕнче шкул çулне çитменнисен 240 вырăнлă вĕренӳ учрежденине» тума – 22 409,94 пин тенкĕ.

3. «Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕ» АУОна кредит тăрăх процентсем тӳлеме кайнă тăкаксен пайне тӳлеме – 6 231,9 пин тенкĕ.

# Уй-хирте

### ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ял хуçалăх предприятийĕсем тĕш тырăсемпе пăрça йышши культурăсене 10387 гектар пухса кĕртнĕ. Ку вăл планпа палăртнин 80 проценчĕ.

Çĕр улми 16,6 гектар кăларнă е плана 1,1 процент пурнăçланă.

Кĕр акине вăхăтра ирттерни пĕлтерĕшлĕ. Хальлĕхе кĕр тыррисене 1459 гектар акнă, çав шутран ыраш – 849 гектар, тулă – 610 гектар.

«Агрохмельте» хăмлана 4 гектар çинчен пухса кĕртнĕ. Тухăç – 12 центнер.

**Е.ТОЛСТОВА.**

### К СВЕДЕНИЮ НАСЕЛЕНИЯ!

С сентября 2012 года работает Общественная приемная Общественного Совета при МО МВД России «Вурнарский». Приемная расположена в здании страхового отдела в п.Вурнары филиала ООО «Россгострах» в Чувашии по адресу: пос.Вурнары, ул.Ленина, д.37 (2 этаж, кабинет начальника страхового отдела).

Прием населения будет проводиться с 16 до 18 часов в каждую вторую среду месяца.

В сентябре прием будет вести член Общественного Совета директор ФСК «Вурнарский» Афанасьев Николай Федотович.

**Районти «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата çырăнтарас тапхăр пуçланчĕ**

2013 ÇУЛХИ ПĔРРЕМĔШ ÇУР ÇУЛ ВАЛЛИ РАЙОН ХАÇАТНЕ ХАЛЬХИ ХАКПАХ ÇЫРĂНТАРАÇÇĔ:

почта урлă илсе тăма – 199 тенкĕ те 80 пуспа, редакцие килсе илмелле – 120 тенкĕпе.

ЕНЧЕН ТЕ ЭСĔ РАЙОНТА ПУРĂНАН Е ĔÇЛЕТĔН ПУЛСАН, АН ЮЛСАМ ПУРНĂÇРАН – «ÇĔНТЕРӲ ÇУЛНЕ» ÇЫРĂНСАМ!

### ÇАНТАЛĂК

| | Вырсарни кун 2.09 | Тунти кун 3.09 |
|---|---|---|
| кăнтăрла | +13 | +16 |
| çĕрле | +6 | +7 |

| | Ытлари кун 4.09 | Юн кун 5.09 |
|---|---|---|
| кăнтăрла | +16 | +16 |
| çĕрле | +11 | +10 |

«Метеоновости» ИА информацийĕ тăрăх.

